CLXIV. Вушкё йăрап йешёл сухап,—
Ан касăрсем, ыт çамрăк.
Кађђи ватă хёрё çамрăк,—
Ан илёрсем, ыт çамрăк.
Тавра йалсен кўллинђе
Сакăр мăшăр шапи пур,
Хамăр йалсен кўллинђе
Тăхăр мăшăр çăрттан пур.
Тавра йалсен вăййинђе
Сакăр мăшăр урçа пур.
Хамăр йалсен вăййинђе
Тăхăр мăшăр тантăш пур

(Хурамал).

»Не срѣзывайте лука, растущаго на двѣнадцати грядахъ: онъ очень молодъ. Женихъ старъ, а невѣста—молодая, не берите ее, ужъ очень она молода. Въ озерахъ сосѣднихъ деревень восемь паръ лягушекъ, а въ озерѣ нашей деревни—девять паръ щукъ. Въ хороводахъ окрестныхъ деревень восемь паръ вдовцовъ, а въ нашемъ деревенскомъ хороводѣ—девять паръ (молодыхъ) сверстниковъ«.

CLXV. Хирте куйап йёрри пур,
Йалта ларма хёрё пур.
Кайри ђўређёр хыçёнђе
Сарă кађђă йёрри пур.
Хура ђёкеç пулам-и,
Хуралтăр çине ларам-и?
Сарă кайăк пулам-и,
Сарайăр çине ларам-и?
Ђăпар куккук пулам-и,
Тыткăр çине ларам-и?
И, тытаймăр, тытаймăр,
Тытсап та пумай усраймăр.
Кайас вăхăт çитсессён,
Пыл-сахăр парсă ђараймăр.

(Хурамал).

«Въ полѣ есть заячьи слѣды, въ деревнѣ для посидѣнокъ есть дѣвушки. За вашимъ заднимъ окошкомъ есть слѣды русаго парня. Не стать ли мнѣ черною ласточкою и не сѣсть ли на ваше строеніе? Не стать ли мнѣ желтою птичкою и не сѣсть ли на вашъ сарай? Не стать-ли мнѣ пестрою кукушкою и не сѣсть ли къ вамъ на перила? Нѣтъ, не поймаете вы меня, не поймаете, а и поймаете, такъ не надолго удержите. Когда придетъ пора мнѣ уходить то не удержите вы меня ни сахаромъ, ни медомъ».

Хӗр йӗррп.

CLXVI. Хурамал урам аслă урам,
Аслă та пулсан мамăклă;
Ун мамăкне çил çӗклӗ,
Мапăп пуçа Турă çӗклӗ.
Хурамал хирӗ сарă çеçке,
Йепле ытарса тухăп-шп?
Кекен хирӗ кăвак çеçке,
Йепле ытара кӗрӗп-шп?
Епӗ ытара кӗреймӗп,
Турă ытара кўрттӗр-п!

(Хурамал).

Плачъ невѣсты.

«Кармалинская улица—широкая, хоть и широкая, да пуховая. Пухъ съ нея подниметъ вѣтеръ, а мою голову подниметъ Богъ. Въ кармалинскомъ полѣ—желтые цвѣты,—какъ мнѣ съ ними,будетъ разставаться? Въ кекенилгинскомъ полѣ синіе цвѣты,—какъ я рѣшусь на разлуку, чтобы пойти туда? Не смогу я разлучиться и пойти туда: пусть самъ Богъ ведетъ меня, если я здѣсь лишняя».

CLXVII. Урхамахсем улттăп, утçăм пӗҫҫеп:
Çăк туртаймӗ тесе хăратăп;
Çпҫӗ йутсем çиҫҫӗп, еп пӗр пӗҫҫеп,
Кун кураймăп тесе хăратăп.

(Хурамал).

«Аргамаковъ семь, а у меня лошадка - одна: боюсь, что не свезетъ она воза. Чужихъ людей семеро, а я одинока: боюсь, что не видать мнѣ (свѣтлыхъ) дней»

CLXVIII. Йухат шывсем, йухат шывсем
Йухат шывсем Шурӑ Атӑл ҫийӗнҙе.
Йухрӗ карӗ, йухрӗ карӗ
Шурӑ аккӑш ҙӗпписем (2).
Ӑҫтан ҫӗкленҙӗҫ (2)
Ӑҫтан ҫӗкленҙӗҫ ҫамрӑк хурҙӑкисем (2),
Тапрӗ карӗ (2),
Тапрӗ карӗ шурӑ аккӑш ҙӗппине (2).
Тӗкне ҫӑлҙӗҫ (2)
Тӗкне ҫӑлҙӗҫ ҫӳлӗ ҫыран хӗрринҙе (2),
Мамӑкне пухрӗҫ (2),
Мамӑкне пухрӗҫ ҫӗнӗ ҫыппӑн арҙине (2).
Кайаҫҫӗ хӗрсем (2),
Кайаҫҫӗ хӗрсем ҫӗнӗ ҫӗре мул пухма (2),
Килеҫҫӗ хӗрсем (2),
Килеҫҫӗ хӗрсем ҫӗнӗ ҫӗртен мул пухса.
(Йӑлпӑлак).

«Течетъ вода по рѣкѣ Бѣлой, поплыли по ней бѣлые лебедята. Откуда ни возьмись молодые ястреба, убили они бѣлаго лебеденка. Его перья ощипали на высокомъ берегу, а пухъ собрали въ сундукъ молодой жены. Дѣвушки идутъ на новыя земли, чтобы тамъ добро наживать; дѣвушки приходятъ съ новыхъ земель съ нажитымъ тамъ добромъ».

CLXIX. Ҫӳлӗ ту ҫинҙе ват йуман (2),
Йуман та мар, мӗн те мар,
Пуссаҙи (2).
Тийак аҙи пулайҙӗ (2),
Ҫӳҫне вырӑсла кастарҙӗ,
Пуссаҙи (2).
Парлак ҫинҙе ҫырлалӑх (2),
Ҫырла та мар, мӗн те мар,
Пуссаҙи (2).
Пике хӗрӗ пулайҙӗ (2),
Ҫӳҫне ҫупа турарӗ,
Пуссаҙи (2).

Урамин айакки кăвак çеçке (2),
Тайăла, тайăла ташлар-и,
Пуссађи (2).
Ик кас хĕрĕ пĕр килсе)
Пухăна пухăна выљар-и,
Пуссађи (2).
Пухăна пухăна выљани (2)
Шыв йуххипе йухаĭ пуљ,
Пуссађи (2);
Çаврăна, çаврăна выљани (2)
Çавра çилпе кĕçет пуљ,
Пуссађи (2);
Тытăна, тытăна выљани (2)
Тыкăр вĕçне йулат пуљ,
Пуссађи (2).
Çӳљĕ ту çине ăлăхсан (2)
Анас тесе ан калăр,
Пуссађи (2);
Çакă вăййа тухсассăн (2)
Кĕрес тесе ан калăр,
Пуссађи.
Тирки, тирки вĕр пăтти (2),
Çусăр çисе пулас çук, пуссађи.
Вырăн сарса минтер хурсан
Пĕђђен выртса пулас çук, пуссађи.

(Йăлпăлак)

На высокой горѣ старый дубъ. Оказалось, что это и не дубъ, а писарской сынъ, остригшійся по-русски. На заброшенной землѣ ягодники. Оказалось, что это и не ягоды и не что, а барынина дочка, причесавшая себѣ волосы, намазавъ ихъ масломъ. По сторонамъ улицы синіе цвѣты: давайте плясать, покачиваясь. При участіи дѣвушекъ съ обоихъ концовъ деревни давайте играть, собравшись вмѣстѣ. Наши общія игры, вѣроятно, уплывутъ по теченію воды; наши круговыя игры, вѣроятно, улетятъ по вихрю; наши перемежающіяся игры, вѣроятно, останутся въ углу закоулка (?) Если подниметесь на высокую гору, то не говорите, что надо спуститься внизъ; когда выйдете въ этотъ хороводъ, то не говорите, что надо идти домой. Просяную

кашу, наложенную на блюда, нельзя будетъ ѣсть безъ масла: если постелешь постель и положишь подушку, то нельзя будетъ спать въ одиночку.

CLXX. Çӳлĕ ту çинҫе виç ăвăс;
Тăрне касса тан тăвас (2).
Хамăрпа ӳсĕ хĕрсене (2)
Куçран пăхса ҫуп тăвас (2).
Пиçи-пиçми çырлашăн (2)
Ҫĕрес йăтса ан тухăр (2),
Ӳси-ӳсми хĕрсемшĕн (2)
Пар ут кӳлсе ан тухăр (2).
Ҫĕрес йăтса шыва апсан (2)
Çăртан пулли лекинҫҫĕ (2);
Пар ут кӳлсе тухсассăн
Ырă çын хĕрĕ лекинҫҫĕ (2).
Пире ырă çын хĕр памĕ (2):
Тухăç халĕ çырлана,
Епир çавăнтан вăрлăпăр (2).

(Йăлпăлак).

»На высокой горѣ три осины; нужно обрѣзать ихъ верхушки и сдѣлать ихъ равными. Дѣвушекъ, выросшихъ вмѣстѣ съ нами, надо поцѣловать, посмотрѣвъ имъ въ глаза. Не выходите съ черясомъ за ягодами, которыя еще не совсѣмъ созрѣли; не выѣзжайте на парѣ лошадей за дѣвушками, которыя еще не совсѣмъ выросли. Когда пойдешь съ черясомъ за водой, хорошо, кабы попала рыба щука; когда выѣдешь на парѣ лошадей, хорошо, кабы попалась дочь добраго человѣка. Добрые люди не выдадутъ за насъ своихъ дочерей; погоди, вотъ онѣ пойдутъ по ягоды, мы ихъ тамъ и украдемъ.

CLXXI. Çӳлĕ ту çинҫе туйралăх (2).
Вайу, скаши, вайу, скаши, вайупа,
И-и-и, çавратинки, е мила *).
Туйри лайăх пĕрепе (2).

---

*) Непереводимый припѣвъ. Слова «скаши» и «мила»—русскія—скажи, милая.

Вайу скашп etc.
Пĕрени лайăх кĕлет тума (2),
Кĕлеҫĕ лайăх мул тытма (2),
Мулĕ лайăх хĕр илме (2),
Хĕрĕ лайăх выљама (2),
Тути çўхе ђуп тума (2).

(Йăлпăлак).

«На высокой горѣ дубнякъ. Дубнякъ хорошъ на бревна; бревна хороши на клѣть; въ клѣти хорошо класть добро; на добро хорошо купить дѣвушку; съ дѣвушкой хорошо играть, а въ ея тонкія губы хорошо цѣловать»

CLXXII. Вĕтлĕх айĕ пĕрлĕхеп.
Вĕтĕ, вĕтĕ тийаттăр,—
Пĕрлĕхен пумай çинĕ епир.
Çавăнпа вĕтĕ пулнă епир.
Лутра, лутра тийаттăр,—
Пиртен лутра кăвакал;
Хура, хура тийаттăр,—
Пиртен хура хурлăхан.
Пĕкрĕç, пĕкрĕç тийаттăр,
Пиртен пĕкрĕç сысна пур.

(Хурамал).

«Подъ кустами растетъ костяника. Вы называете насъ мелкими: много мы ѣли костяники, оттого мы и стали мелки. Вы зовете насъ низенькими,—утки еще ниже насъ; вы говорите, что мы черны,—смородина еще чернѣе чѣмъ мы; вы обзываете насъ горбатыми,—свиньи еще горбатѣе насъ».

CLXXIII. Тĕттĕрпп арман айĕнђе
Виç пăталкка тулă çурат (2).
Унăп кĕрпине мĕп çийат?
Шур кăвакал, çав çийат (2).
Шурă кăвакал вĕçтертĕм,
Шур йур çине ўкертĕм (2).
Шурă пĕркепђек вĕçтертĕм,

Хӗр пуҫ ҫипе ӳкертӗм (2).
Улӑм та тӗрки вӗҫтертӗм,
Аслӑк ҫине ӳкертӗм (2);
Утӑ та тӗрки вӗҫтертӗм,
Ыр ут умне ӳкертӗм (2);
Пурҫӑн та тӗрки вӗҫтертӗм,
Хӗр ђӗр-ҫине ӳкертӗм,
Пушӑт та тӗрки вӗҫтертӗм,
Арҫын умне ӳкертӗм (2).
Мамӑкран минтер хӑпартрам,
Хӗр кут айне ӳкертӗм (2);
Тимӗртен пукан ҫаптартӑм,
Кађђӑ урайне ӳкертӗм (2).

(Хурамал).

»Подъ маленькой быстро вертящейся мельницей обдираютъ три пудовки пшеницы. — Кто ѣстъ ея отруби? — Ихъ ѣстъ бѣлая утка. — Я пустилъ летѣть бѣлую утку,—она полетѣла и сѣла на бѣлый снѣгъ; я пустилъ летѣть бѣлую фату,—она пала на голову дѣвушки. Я пустилъ летѣть пукъ соломы, и она упала на сѣновалъ; я пустилъ летѣть пукъ сѣна, и онъ упалъ передъ добрымъ конемъ. Я пустилъ летѣть мотокъ шелку, и онъ упалъ на колѣни дѣвушки, я пустилъ летѣть связку лыка, и она упала передъ мужчиною. Я набилъ пухомъ подушку и положилъ ее подъ сидѣнье дѣвушкѣ я велѣлъ сковать желѣзный стулъ, и поставилъ его подъ ноги парню».

CLXXIV. 1. Шур-шур акка, шур акка,
Ђӳређе виттӗр пӑх, акка!
Ыттах пӗвӳ ҫитмесен,
Арђа лартса пӑх, акка!
Ыттах ђупу савсассӑн,
Туттӑр йарса пӑх, акка!
И, кирлӗ мар, кирлӗ мар,—
Туттӑру вӗҫӗ хӗрлӗ мар.
Сан хӗрлӳпе мӗн тӑван?—
Кӳр, тутӑна ђуп тӑван.
2. Ђӑпар, ђӑпар ҫӑмарта
Йӗп ђикмешкӗн вырӑн ҫук (2);

Епир вӑйиа тухсассӑн,
Каҫҫӑ тӑма вырӑп ҫук (2).
Тӑма вырӑп ҫук тесе (2).
Ерленетрим, каҫҫӑсем (2)?
Ҫӗр сум укҫа пур тесе (2)
Мухтапатрим, каҫҫӑсем (2)?
Ҫӗр сум парса хӗр илсен (2),
Ҫарайрӑр-и хӗрсене? (2).
3. Ан хуйхӑрӑр, ватӑсем,
Куланай пӑрахӑҫ пулаӗ тет;
Ан хуйхӑрӑр, ҫамрӑксем,
Хӗр хӗрӗх сум пулаӗ тет.
Хӗр хӗрӗх сум пулнӑ ҫух
Пирӗн кине тин илес.
Хӗр виҫ ҫӗр сум пулнӑ ҫух
Пирӗн каҫҫа тин кайас.

(Хурамал).

1. «Бѣлая сестрица, бѣлая сестрица! посмотри, сестрица, сквозь окошко. Если ты не достанешь до окошка, то подставь подъ ноги сундукъ и посмотри. Если ты дѣйствительно любишь, то попробуй послать платокъ. Нѣтъ, не надо не надо,—концы у твоего платка не красные. Ну, да что мнѣ дѣлать съ твоею краснииою? давай-ка я поцѣлую тебя въ губы».

2. «Въ пестрое яйцо некуда воткнуть иголки; когда мы выйдемъ въ хороводъ, то парнямъ негдѣ бываетъ стоять. Что, парни? вы досадуете, что вамъ негдѣ стоять? Что, парни? вы хвалитесь, что у васъ есть сто рублей? Если вы возьмете дѣвушекъ, заплативши за нихъ по сту рублей, то сумѣете ли еще вы съ ними справиться»?

3. «Не горюйте, старики,—говорятъ, что податей не будетъ; не горюй, молодежь,—говорятъ, что дѣвушки будутъ по сорока рублей.—Только тогда намъ надо брать снохъ, когда невѣсты будутъ по сорока цѣлковыхъ *).—Только тогда намъ надо выходить замужъ, когда невѣсты будутъ по триста рублей **)».

CLXXV. Урам варӗнҫи ҫӗп курӗк
Сыспа кулли пулайҫӗ.

---

*) Говорятъ старики.
**) Говорятъ дѣвушки.

Тавра йалсен хĕрĕсем
Урçа кулли пулайђĕ.
Урам варĕнђи туплашка
Тапрăм пăхрăм—курвашка.
Тавра йалсен хĕрĕсем
Пурте вăсем курвашка.
Аккăш пырать хир тăрăх,
Сасси пырать ту тăрăх.
Хĕрĕ пырать урам тăрăх,
Кађђи пырать шыв тăрăх.
Йарăм (2) хурт-куççи
Сапрăм йатăм Самара.
Самар урамĕ хурт-куççи,
Епир упа пухас çук,
Пухсан пухĕ çавра çил.
Çынсен кăмăлђ пит пысăк:
Епир упа кўрес çук.
Кўрсен кўрĕ ырă çын.

(Хурамал).

«Трава, растущая среди улицы, досталась въ добычу свиньямъ; дѣвушки окрестныхъ селеній сдѣлались добычею вдовцовъ. Среди улицы торчитъ кочка (?). Я подошелъ и пнулъ ее ногою,—хвать,—не кочка, а потаскушка. Дѣвки окрестныхъ деревень всѣ до одной потаскушки. Лебедь летитъ вдоль поля, а его голосъ раздается вдоль горы; дѣвушка идетъ по улицѣ, а парень идетъ по берегу рѣчки. Цѣлыя снизки ужовки разсыпалъ я по Самарѣ. Не намъ собрать ужовку съ самарскихъ улицъ, а соберетъ ее кружащійся вихрь. Очень ужъ горды люди: не намъ имъ угодить, а если кто и угодитъ, такъ добрые люди.»

CLXXVI. Ђашки (2) шур шăрçа
Тапса тăкса пулмарĕ.
Вăйпа тухман хĕрсене
Пĕр йатласа пулмарĕ.
Епир вăйпа тухсассăн,
Килет урам илемĕ,

Епир вăйăран кĕрсе:сĕн,
Кайаҕ урам илемĕ.

(Хурамал).

»Бѣлый бисеръ, насыпанный въ чашки, не удалось пнуть и разсыпать; дѣвушекъ, которыя не выходятъ въ хороводъ, ни разу не удалось побранить. Когда мы выйдемъ въ хороводъ, то улица становится красивою, а когда мы разойдемся изъ хоровода по домамъ, то улица теряетъ всю привлекательность«.

CLXXVII. Куккăр кутлă шур хурăн
Куккăри майăн ҫаврăнаҕ.
Епир выљасси, куласси
Ҫулталăкра ҫаврăнаҕ.
Касă-касă пĕлĕт тухаҕ,
Салантăр, кайтăр тĕнђене.
Епир выљасси, куласси
Кайинђђĕ ĕмĕр тăрăшĕне.

(Хурамал).

»Береза кривая съ корня, поворачивается по своей кривизнѣ; наши игры и веселье повторяются изъ года въ годъ. Поднимаются кучки облаковъ,—пусть разойдутся они по всему міру. Ахъ, если бы наши игры и веселье продолжались всю нашу жизнь.«

CLXXVIII. Кĕпер ҫинђи шурă йур
Нумай тăмĕ, хаљ пĕтĕ.
Ей мăнтарăн вăййисем,
Нумай тăмĕ, хаљ пĕтĕ.
Епир вăййа тухнă-ҫке,
Есир ăмма тухмастăр?
Ирĕн таптăш тухнă-ҫке,
Сирĕн таптăш тухман-им?
Алăхмăттăм ту ҫине,—
Вĕлтĕр вĕҫен укҫа пур:
Тухмăттăм-ђђĕ ҫак вăййа,
Ђуп илĕртен таптăш пур.

(Хурамал).

«Бѣлый снѣгъ, выпавшій на мостъ, не долго пролежитъ, скоро растаетъ. Ахъ, не долго продолжатся эти милыя игры, скоро онѣ минуютъ. Мы уже вышли въ хороводъ, почему же вы не выходите? Наши сверстники уже вышли, а ваши—развѣ нѣтъ? Не сталъ бы я подниматься на гору, да есть тамъ деньги, летящія колеблясь; не сталъ бы я выходить въ этотъ хороводъ, но тамъ есть подруга, прельщающая сердце.»

CLXXIX. Шӗшкӗ тӑрӑх (3) шыв йухаҫ, аљђуљи.
Шӗшкӗ тӑрӑх шыв йухаҫ, аљђуљи.
Сивӗ те пулсан еп ӗҫмӗп, аљђуљи.
Ҫерем ҫинђеп (3) шыв йухаҫ аљђуљи.
Ӑшӑ та пулсан (3) еп еҫӗп аљђуљи.
Йал варринђеп (3) шыв йухаҫ, аљђуљи.
Тавра йал ађи (2) сарӑ ађа, аљђуљи,
Сарӑ та пулсан (3) еп савмӑп аљђуљи.
Хамӑр йал ађи (2) хура ађа, аљђуљи,
Хамӑр йал ађи хура ађа, аљђуљи.
Хура та пулсан еп савӑп, аљђуљи,
Хура та пулсан еп савӑп, аљђуљи.
(Хурамал).

«По орѣшнику вода течетъ; хоть и холодна она, но не буду ее пить. По лужайкѣ вода течетъ; хоть и тепла она, но стану ее пить. Посреди деревни вода течетъ. Парни въ окрестныхъ деревняхъ русые, но хотя и русые, а не стану ихъ любить; наши деревенскіе ребята—черноватые, но хотя и черноватые, а буду ихъ любить.»

CLXXX. Пыраттӑм, пыраттӑм ҫулпалап, ҫулпалап,
Пӗр лап ҫырла тӗл пултӑм, тӗл пултӑм.
Татап (2)—пӗтмес-кам, пӗтмес-кам,
Киле таврӑпас килет-кам, килет-кам.
Вӑрман виттӗр тухна ђух, тухнӑ ђух
Пӗр йывӑҫа куҫ хыврӑм, куҫ хыврӑм;
Касса каймӗҫип лайӑх-ђӗ, лайӑх-ђӗ.
И, кайӗҫип кайӗҫ хаљ, кайӗҫ хаљ,—
Вӑрманта йывӑҫ пӗтмеп хаљ, пӗтмеп хаљ.
Йал-йал виттӗр тухнӑ ђух, тухнӑ ђух
Пӗр сар хӗре куҫ хыврӑм, куҫ хыврам;

Илсе каймĕçин лайăх-ђé, лайăх-ђĕ.
И, кайĕçин, кайĕç хаљ, кайĕç хаљ,
Йалта сар хĕр пĕтмен хаљ, пĕтмен хаљ.
(Хурамал).

«Шелъ я по дорогѣ и набрелъ на кустъ ягодъ. Рву я ихъ, рву, и все не могу ихъ сорвать всѣ; а хочется идти домой. Когда я шелъ по лѣсу, то я намѣтилъ себѣ одно дерево; хорошо бы, если бы его не срубили другіе. Впрочемъ, срубятъ, такъ пусть срубятъ—въ лѣсу деревьевъ и безъ того не мало. Когда я шелъ по деревнямъ, то намѣтилъ себѣ одну русую дѣвушку; хорошо, какъ ее не возьмутъ другіе. Ну, да возьмутъ, такъ пусть возьмутъ—въ деревняхъ и безъ нея не мало русыхъ дѣвушекъ.»

CLXXXI. Турă лашаçăм турта хушшинђе,
Пурçăн йĕвенĕсем пуçĕнђе.
Пĕвĕмĕрсем сирĕн умăрта,
Ђунăмăрсем Турă аллинђе.
(Хурамал).

«Гнѣдая лошадка стоитъ въ оглобляхъ, а шелковая узда—на ея головѣ. Наши тѣла стоятъ передъ вами, а наши души—въ рукахъ Божіихъ.»

CLXXXII. Кайăк хурсем килет картипе,
Кикак тийаканни пĕри çук;
Çак тăвансем патне еп килсессĕн
Киђах тийаканни пĕри çук.
(Хурамал).

«Вереницею летятъ дикіе гуси, но ни одинъ изъ нихъ не кричитъ: «гага»! Когда я пріѣду къ этимъ родственникамъ, то ни одинъ изъ нихъ не приглашаетъ меня войти.»

CLXXXIII. Хурамал тăвĕ çÿлĕ ту,
Утçăм ђупса ăлăхаймаç.
Пире курайман тăшмансен
Ђĕлхи хытнă, ђĕпеймеç.
(Хурамал).

«Кармалинская гора т. кая высокая, что моя лошадка не можетъ на нее взбѣжать; у нашихъ ненавистниковъ—недруговъ онѣмѣли языки, такъ что не могутъ слова молвить.»

CLXXXIV. Урамӑртан куппис иртсе пырат:
Илсен, илмесен те тухса кур.
Саватӑн-и, тӑван, савмастӑн-и?
Савсан, савмасан та пырса кур.

«По вашей улицѣ проѣзжаетъ торговецъ: хоть ты купишь, не купишь, а выдь посмотрѣть. Любишь ли ты меня, родной, иль не любишь? Хоть ты любишь, не любишь, а приди повидаться.»

CLXXXV. Хурамал ҫырми тӑрринче йешел курӑк,
Утҫӑм ҫийас курӑксем ку мар;
Сирен ҫӗрӗр-шывӑрсем пит илемсӗр,
Епир тӑрас ҫӗр-шыв кунта мар.
(Хурамал).

«По кармалинскому оврагу—зеленая трава, но не такая это трава, чтобы ѣсть моей лошадкѣ; ваша злѣшняя сторона ужъ очень непригляднa: не здѣсь тотъ край, гдѣ мы будемъ жить»

CLXXXVI. Шурӑ кӑвакал ҫӗпписем
Кӳл, кӳл урлӑ, кӳл урлӑ;
Кӳл урлӑ та пулсан курас-ҫӗ.
Пирӗн тӑвансем пит айакра,
Айакра та пулсан курас-ҫӗ.
(Хурамал).

«Бѣлые утята за озеромъ, но все-таки хотѣлось бы на нихъ посмотрѣть; наши родные очень далеко, но все таки хотѣлось бы мнѣ ихъ повидать».

CLXXXVII. Шорӑ теҫҫӗ, илемлӗ теҫҫӗ
Олма йӑвӑҫҫини ҫеҫекне;
Сарӑ теҫҫӗ, лайӑх теҫҫӗ
Вон-ҫиҫ ҫолхи хӗрсене.

Ап пыр, аҕам, хӳме ҫӑмпе
Хӳми кусӗ ху ҫине;
Ап ил, аҕам, наҕар хӗре,
Хойхи йолӗ ху ҫине.

(Тӗрлемес).

«Говорятъ, бѣлы и красивы яблоновые цвѣты; говорятъ, русы и пригожи семнадцатилѣтнія дѣвушки. Не подходи, парень, близко къ забору, а то упадетъ онъ на тебя; не бери, парень, плохую невѣсту, а то будешь съ нею горе мыкать».

CLXXVIII. Шорӑ пӳрт тӑрне хӑма витпӗ
Ҫӑмӑр ҫуса витеерен.—
Хӗр пур ҫынсем хӗрпе сыхлаҫҫӗ
Хӗрӗ тохса кайасран.
Шорӑ пӳртӗн ҕӑлапӗнҕе
Сӑмавар вӗрет кӑмрӑксӑр.
Епир иртсе кайпӑ ҕохпе
Пирӗн тӑвансем кӑмӑлсӑр.
Пӗҕикҫиҫ кӳлӗ, ҫаврака кӳлӗ,
Кӳлӗ варринҕе ҫӑл полинҕҕӗ;
Пӗҕикҫиҫ питлӗ, ҕакӑр куҫлӑ
Пирен Торӑ ҫырни полинҕҕӗ.

(Тӗрлемес).

«Бѣлая изба покрыта тесомъ, чтобы не проливало во время дождя; тѣ, у кого есть дочери, стерегутъ ихъ, чтобы дочки не вышли (тайкомъ) замужъ».

«Въ чуланѣ бѣлой горницы безъ углей кипитъ самоваръ; когда мы проходимъ мимо (и не заходимъ), то обижаются наши родные».

«Маленькое озеро—кругленькое озеро; хорошо, если бы посреди его былъ родникъ. Хорошо, кабы дѣвушка съ маленькимъ личикомъ и разноцвѣтными глазами была нашею суженою».

CLXXIX. Муҕи пире хӑватӑр йар,
Хӑватӑр йар та хӗрне пар.
Хӗрӗ полтӑр тӳшеклӗ,
Тӳшекки полтӑр ҫиттиллӑ,
Ҫитти полтӑр ҫӳҫеллӗ,

Ҫӳҫи полтӑр тепкӗллӗ,
Тенки полтӑр патшаллӑ,
Патши полтӑр мараллӑ,
Мари полтӑр аҕаллӑ,
Аҕи полтӑр карттуслӑ.
Карттус ҫиҕе вӑй-выҕат,
Пирӗн алӑра хӗр выҕат.

(Килтӗш).

«Дѣдъ, пусти насъ къ себѣ въ постояльцы и отдай ты за насъ свою дочку. Чтобъ съ периной была твоя дочка, чтобъ перина была съ простынею, простыня чтобъ была съ бахромою, бахрома чтобъ была все съ рублями, а рубли чтобы были съ царями; у царей чтобы были царицы, у царицъ чтобы были ребята, чтобъ ребята все были въ фуражкахъ. Ихъ фуражки такъ вотъ и играютъ *), у насъ въ ручкахъ невѣста играетъ».

CXC. Пăтӑк (2) пытӑна,
Пытӑна уйра атмасан,
Уйӑн кӗрнӗк килес ҫок.
Епир туйа каймасан,
Туйӑн кӗрнӗк килес ҫок.

(Килтӗш).

«Пыть, пыть, перепелка! Если перепелка не будетъ кричать въ полѣ, то у поля не будетъ никакой привлекательности. Если мы не пойдемъ на свадьбу, то и свадьба будетъ неприглядной».

CXCI. Вон-ик ҕӑрӑш пӗр котра,
Тораттисем пӗр майлӑ.
Пирӗн лашисем кил майлӑ,
Епир хамӑр хӗр майлӑ.

(Килтӗш).

«Двѣнадцать елей всѣ растутъ изъ одного корня, а ихъ вѣтви всѣ въ одномъ направленіи. Наши лошади норовятъ, какъ бы домой, а мы сами норовимъ, какъ бы за дѣвками».

---

*) Т. е. красивы, блестящи.

CXCII. Хёрсен тапни сарайӑнђе,
Полштоф кӗленђи сак айӑнђе,
Ҫӗтӗк кулек кот айӑнђе,
Хора кипки пуҫ айӑнђе.
Йаш ађасам йалт та йалт,
Сарай алӑк шолт-шолт-шолт!

(Килтӗш).

«Ловушка для дѣвчёнокъ—подъ сараемъ, полштофная посуда подъ лавкой; рваный кулекъ—подстилка, черная ветошка—изголовье. Молодые ребята такъ и снуютъ, а ворота сарая такъ и хлопаютъ».

CXCIII. Сарӑ, вӑрӑм арӑм-ђђӗ;
Айта туйа терӗм те,
Порҫӑн тоттӑр ҫок терӗ.
Ах, шеђма, шалккӑ-ҫке,
Йӑпӑшт шӑлаӑ куҫ шуне!
Хора, вӑрӑм арӑм-ђђӗ.
Айта туйа терӗм те,
Хора постав ҫок терӗ.
Ах, шеђма, шалккӑ-ҫке,
Йӑпӑшт шӑлаӑ куҫ шуне!

(Килтӗш).

«Была у меня высокая русая жена: я сказалъ ей: пойдемъ на свадьбу,— а она отвѣчаетъ: нѣтъ шелковаго платка. Ахъ, шельма, какая жалость: такъ и утираетъ втихомолку слезы!

Была у меня высокая жена, брюнетка; я сказалъ ей: пойдемъ на свадьбу,—а она отвѣчаетъ: нѣтъ чернаго кафтана. Ахъ, шельма, какая жалость такъ и утираетъ втихомолку слезы!

CXCIV. Йалти сӑра—йантӑ сӑра;
Йантипе мӗнпе пӗлмерӗмӗр,
Тытрӑмӑр та ӗҫрӗмӗр.
Йалти ипке—йантӑ ипке;
Йантипе мӗнпе пӗлмерӗмӗр,
Тытрӑмӑр та выђарӑмӑр.

(Ту-ҫи Олкаш).

«Деревенское пиво—готовое; мы не справлялись о томъ, готово ли оно, или нѣтъ, а взяли да выпили. Деревенская тетка—готовая; мы не освѣдомлялись о томъ, готовая она, или нѣтъ, а взяли да поиграли».

CXCV. Çакă йалăн хĕрĕсем
Пирĕн йала пырашшăн
Торра така парнă тет;
Така шўрпи пиçиђђен
Йасар косма кайнă тет;
Йасар ђопса килиђђен
Шўрпи типсе ларнă тет.

(Ту-çи Олкаш).

«Чтобы попасть (замужъ) въ нашу деревню, дѣвушки этой деревни принесли въ жертву барана. Пока поспѣвала баранья похлебка, онѣ побѣжали таскаться, а пока онѣ таскались, похлебка успѣла вся выкипѣть».

CXCVI. Мĕншĕн сăра тути çок?
Амăшшем хăмла татнă ђох
Карта орлă йăрт та йорт!
Çаппа сăра тути çок.

(Ту-çи Олкаш).

«Почему у пива нѣтъ никакого вкуса?—Когда мать ея (невѣсты) рвала хмѣль, то она то-и-дѣло таскалась черезъ заборъ,—поэтому пиво и невкусно».

CXCVII. Сорăх Ори елĕк полнă мăпарџи-кон. Ађасам пĕр çĕре пуçтарăнса ĕреттине килĕреп йорласа çўређђĕ:
Йар, йар, ники, алăкпе,
Çут хăйине çуттипе,
Кас коккăљне çулпне,
Ас сăрине ыррипе.

Ола кошак, шор кошак
Шашан тăрăх ђопкалат,
Котне шăрпăк тирнĕ тет.

Сорăх-ори, Варвари,
Сорăхсам пыťак туђђăр-и,
Арăмсам ађа туђђăр-и.
Хĕрсем хĕсĕр полђђăр-и.

(Ту-çи Олкаш).

«Раствори, тетенька, дверь, засвѣти свѣтлую лучину, нарѣжь масленаго пирога, нацѣди хорошаго пива».

«Пѣгая и бѣлая кошки бѣгаютъ по полѣнницамъ и, говорятъ, занозили себѣ задницы».

«Овечья нога, Варвара, овцы пусть приносятъ ягнятъ, бабы пусть родятъ ребятъ, а дѣвки пускай будутъ бездѣтными».

CXCVIII. Аťа, арăм, киле кас (=кайас),
Килте ($_{\chi}ил_{д}э$) ађасам макăрађђĕ пођ (=полĕ),
Оккошкаран оккошкайа пăхађђĕ пођ.

(Ту-çи Олкаш)

«Поѣдемъ, жена, домой: дома, поди, ребятишки плачутъ, изъ окошка въ окошко посматриваютъ». (Застольная).

CXCIX. Пиђи мапа ереке ĕçтерет ($ӭс'_{m}э_{p}э_{m}$):
Киле кайтăр, тет ($_{m}э_{m}$) полĕ,
Çĕр выртмасăр каймастăп.
Инки мапа сăра ĕçтерет:
Киле кайтăр, тет полĕ.
Çĕр выртмасăр каймастăп.

(Ту-çи Олкаш).

«Братъ подчуетъ меня водкой,—навѣрно, чтобы я (поскорѣе) ѣхалъ домой,—но я не пойду, не переночевавъ. Сноха угощаетъ меня пивомъ,—навѣрно, чтобы я (поскорѣе) убирался домой,—но я не поѣду, не переночевавъ здѣсь ночь». (Застольная).

CC. Йордас марах тесе-ђђĕ,
Пиђин ђеркки йорлатрĕ,

Йорлас марах тесе-ђђĕ,
Инкин корки йорлатрĕ,

(Ту-çи Олкаш).

«Совсѣмъ не хотѣлъ было я пѣть, но заставилъ меня пѣть братнинъ стаканчикъ. Совсѣмъ не хотѣлъ было я пѣть, но меня принудилъ снохинъ ковшикъ».



Примѣчанія къ чувашскимъ пѣснямъ.

X. „Пирӗн курпи илтпи ҫакӑ пулӗ“ собств. значитъ: «это будетъ то, что мы увидимъ и услышимъ».

XV. „Пӑр“ или „пар“ (послѣдняя форма встрѣчается чаще)—старинное слово, значенія котораго чуваши въ точности не знаютъ. Форму „пӑр“ (*пӑр*) я приравниваю тат. нөр—*привлекательность*, откуда нөрлө—*красивый*, отъ араб. نور — *свѣтъ*. Форма „пар“ м. б. происходитъ отъ араб. نار — *огонь*, евр. נֵר — *свѣтильникъ*. У курмышскихъ чувашъ выраженіе „пар тӑкӑнат“ *) употребляется въ томъ случаѣ, если говорятъ о человѣкѣ съ здоровымъ цвѣтомъ лица.

XVI. „Аҫа кикен“ (соб. *чемерика мужескаго пола*): чемерика—однодомное растеніе, а потому выраженіе „аҫа кикеп“ трудно объяснимо. Можно предположить, что здѣсь имѣется въ виду другое растеніе.

XX. Йетӗн ҫӗлӗк (тат. ҫітін бӳрік), соб. «льняная шапка». —особый родъ шапки съ околышемъ изъ искусственнаго мѣха.

XXI. Кӑтат (тат. кытат) — черная матерія въ родѣ казинета.

XXIV. Патӗйан чит. *пад'јан.*

---

*) Букв. «сыплется свѣтъ?»

«Когда приходитъ гость, хозяинъ нацѣживаетъ пива, наливаетъ его въ ковшъ и сначала пробуетъ самъ, а потомъ опять наливаетъ въ тотъ же ковшъ пива и подаетъ его гостю. Гость беретъ въ руки ковшъ и говоритъ хозяину: „Тавăсйе (тавăсйа) елекхисене, хăта“ (*Спасибо, сватъ, за прежнее угощеніе*). Хозяинъ ему отвѣчаетъ: „Тавах та, курйă пулассӑн, курмапин пумай пулаť“ (*Спасибо и тебѣ, если ты его отъ насъ видѣлъ: давно уже мы съ тобою не видались*). Гость выпиваетъ предложенный ковшъ и протягиваетъ его хозяину, говоря: „Тытах, хăта“ *) (*Ну, держи, сватъ*). Тотъ не беретъ ковша и со словами: „Ęç-ха, ĕç“ (*Пей, пей*) наливаетъ ему еще другой ковшъ. Выпивъ и второй ковшъ, гость опять протягиваетъ его хозяину; но тотъ не беретъ у него ковша и наливаетъ ему въ третій разъ, говоря, что „виçĕ куркасăр пулмаť“ (*меньше трехъ ковшей нельзя*). Хозяинъ принимаетъ отъ гостя ковшикъ обратно только тогда, когда тотъ выпьетъ всѣ три ковша. Передъ тѣмъ, какъ выпить третій ковшъ, гость говоритъ: „Тав сапа, хăта“ (*Привѣтъ тебѣ, сватъ*). Хозяинъ отвѣчаетъ ему: „Тавах“ (*Привѣтъ и тебѣ*). Послѣ этого выпитаго съ привѣтствіемъ ковша хозяинъ снова наливаетъ въ ковшъ пива и пьетъ самъ, привѣтствуя гостя: „Тав сапа“ (*Привѣтствую тебя*). Слѣдующій послѣ привѣтствія ковшъ онъ опять вручаетъ гостю. Такимъ образомъ они пьютъ, привѣтствуя другъ друга, до тѣхъ поръ, пока гость не распрощается съ хозяиномъ и не уйдетъ домой».

XXX. „Вирт“ (тат. ўрт, кирг. öрт)—*палы*, степные пожары.

XLIV. „Куреа калаçасси ђуп пекех“, соб. «свиданіе съ ними такъ же (дорого), какъ своя душа».

XLVIII. „Хаљ шăлăнĕ“ соб. «скоро сотрутся (брови)».

LVIII. Хатĕрлĕ—тат. kaдiрлi, отъ араб. قدر.

LX. „Тăвапсе“—сокращенная форма дат.-вин. падежа.

---

*) Вмѣсто „хăта“, разумѣется, могутъ быть и другія родственныя наименованія, смотря по отношеніямъ между гостемъ и хозяиномъ.

LXIV. Префиксъ невѣдѣнія „та, те“ иногда употребляется для выраженія усиленія, напр. таҫта (таста, ташта) *невѣсть гдѣ, очень далеко;* такам — *невѣсть кто,* такҫан *невѣсть когда, очень давно.*

LXXI. „Тап“ = тат. „дан“ — *слава,* откуда „данныклы“ — *славный.*

LXXIV. „Халал“ отъ араб. حلال — *законный* (против. حرام).

LXXXI. Здѣсь блескъ черныхъ бровей сравнивается съ блескомъ драгоцѣннаго зеркала.

LXXXVII. „Ђӗре ҫомӑнђи ҫӑвӑм шӑранђӗ“ букв. значитъ: «растопился жиръ около моего сердца».

LXXXVIII. Слова: «пусть душа моя попадетъ въ рай» я отношу не къ самому разсказчику, а къ его убитой женѣ. Ђунӑм здѣсь ласкательное выраженіе, подобное тат. џаным.

XC. „Хӗрлӗ ђӗреллӗ“ — *румяный,* букв. «имѣющій красное сердце».

XCIII. Если притяжательный суффиксъ 3-го лица въ словѣ „кӗлеткн“ понимать въ его собственномъ значеніи, тогда это мѣсто можно перевести такъ: «пусть мои взоры останутся на дѣвушкѣ, а ея образъ пусть слѣдуетъ за мною». Слово „келетке“ означаетъ въ чув. языкѣ не только *тѣло,* но и *видъ, образъ, изображеніе, картину.*

CIV. Хођӑм хӗрӗ, букв. «дочь моего тестя», встрѣчается въ пѣсняхъ въ смыслѣ: «моя жена».

CVII. „Отӑ“ у анатри — *островъ,* а у вир-йал кое-гдѣ употребляется для означенія рощи или небольшого лѣса, окруженнаго со всѣхъ сторонъ полемъ. Въ ядр. у. словомъ „отӑ“ обозначаютъ также лѣсную поляну. Срав. тат. „атау“ — *островъ и холмъ.*

CVIII. „Ҫӳлти амнар“ — амбаръ въ два этажа. Порҫӑн тоттӑр — передникъ, а „потене ҫурн“ — membrum virile.

Конецъ правильнѣе перевести такъ: «Не говорите, что парень блѣденъ, потому что онъ, полежавъ съ дѣвушкою, станетъ румянымъ; не говорите, что дѣвушка черна: полежавъ съ парнемъ, она станетъ русою (бѣлою, т. е. поправится тѣломъ)».

CIX. Ӑсе́-ханӑле́, обыкн. ӑсе-хакӑле—*умъ-разумъ*, изъ чув. ӑс—*умъ* и араб. عقل , тат. акыл—idem.

CXIV. Рубашка стала узкою отъ черезчуръ обильнаго угощенія.

CXXII. Объясненіе выраженія „мӑнтарӑн" см. въ моихъ «Матеріалахъ для изслѣд. чув. яз.», стр. 29; иногда это слово употребляется для того, чтобъ выразить сожалѣніе, привязанность, любовь.

CXXIII. Сӑр йупа—крашеные верстовые столбы, «версты полосаты», воспѣтыя поэтомъ.

CXXV. Первыя двѣ строфы имѣютъ такой смыслъ: «не пируйте въ мое отсутствіе, а вспоминайте о моей горькой долѣ».

CXXVII. Пшеничный снопъ на видъ красивѣе, или, какъ говоритъ народъ, «аккуратнѣе», чѣмъ овсяный.

CXXVIII. Вѣтви вербы и ивы здѣсь являются образцомъ стройности и изящества.

CXXX. Послѣднія двѣ строфы надо понимать такъ: дочери добрыхъ людей пусть сорвутъ орѣхи, продадутъ ихъ, и на вырученныя деньги напьютъ себѣ тулуповъ.

CXXXII. Ш а л а н к ӑ.

Пер вахӑтра Тура́ шаланкӑна ула курака шыв кӑларма хушна́. Шаланка́ Тура́ хушшине илтсен: „Пенле каларас-ши?" тесе шухӑшласа а́сласа вӗҫсе сӳрене; ула курак Турӑ хушшине аса та илмен, вӑл: „Пенле шыра тӑрантас-ши?" тесе шухӑшласа хӑрӑк турат ҫинҫе ларнӑ.

Вѐҫсе ҫӳресен-ҫӳресеп, шаланкӑ ҫе́ре пӗр пиђетнӑй (хӑлаҫ) пек ђавса (алтса) пӑхпӑ та ҫавӑнтах ҫӗртеп шыв палкаса тухнӑ. Вара хаваслапнипе вӑл ђасрах ҫӑвӑнса тасалнӑ та, илемле праҫник тумтирѐ тӑхӑпса Турӑ патне шыв кӑларнипе калама вѐҫсе кайнӑ. Ула курак ҫавна курсан Турӑ умӑпђе ырӑ йатлӑ пуласшӑп пылђӑк ҫипђе выртса йӑвалапнӑ та ђасрах Турӑ патне шаланкӑ хыҫҫӑн кайнӑ.

Турӑ патне ҫитсеп, шаланкӑ каланӑ: „Есѐ хушнӑ тӑрӑх епѐ шыв кӑлартӑм“, тепѐ. Ула курак каланӑ: „ҫук, вӑл кӑлармап, епѐ кӑлартам шыва. Вӑл епѐ ҫӑл патӗпђе ѐҫлесе тӑнипе курђѐ те, ырӑ йатлӑ пуласшӑн ҫакӑнта манрап малтап вѐҫейсе килђе. Акӑ мапӑн тумтирѐм те ҫӑл патӗнђе ѐҫлесе саҫҫим варлапса пӗтрѐ“, тепѐ.

Вара Турӑ ула курака ѐнение те шаланкӑ ҫипе асап хунӑ: „Мана улталама тытӑнпӑшӑн ҫумӑр ҫуса шыв кӳлепмесѐр есѐ шыв курайміп ѐнтѐ“, тенѐ.

Шалапкӑ шыв кӑларайі, ула курак пырса ѐҫет.

Переводъ:

Иволга (?)

Однажды Богъ велѣлъ иволгѣ и воронѣ добыть (изъ земли) воду. Иволга, услышавъ Божье повелѣніе, летала и раздумывала, какъ бы это добыть воды, а ворона и не думала о Божьемъ повелѣніи, сидѣла на сухомъ сучкѣ и размышляла о томъ, какъ бы утолить свой голодъ.

Иволга полетала, полетала, потомъ попробовала рыть землю; когда она вырыла яму около печатной сажени глубиною, то изъ земли брызнула вода. Тогда иволга обрадовалась, надѣла нарядную праздничную одежду и полетѣла къ Богу, сказать, что она добыла воды. Когда ворона увидала это, она, чтобы заслужить у Бога похвалу, вываляласъ въ грязи и полетѣла вслѣдъ за иволгой къ Богу.

Прилетѣвши къ Богу, иволга сказала: «Я добыла по твоему повелѣнію воды. Тогда ворона сказала: «Нѣтъ, не она добыла воду, а я. Она уви-

дала, какъ я работала у колодца, и, чтобы заслужить одобреніе, прилетѣла сюда раньше меня—вотъ и все.

Вотъ у меня и одежда вся загрязнилась въ то время, какъ я трудилась у колодца».

Тогда Богъ повѣрилъ воронѣ, а на иволгу наложилъ наказаніе, сказавъ ей: «За то, что ты пустилась меня обманывать, ты не увидишь воды раньше, чѣмъ пойдетъ дождь и соберется (въ лужи) дождевая вода.

Иволга добываетъ воду, а ворона прилетаетъ и пьетъ (Пословица).

У крещеныхъ татаръ также существуетъ подобная пословица о птицѣ шäўлїгäн: „Шäўлїгäн сыу чыђарђан, карђа кїпäнгäн“, т. е. «иволга (?) добыла воды. а ворона ею воспользовалась».

CXLVI. Здѣсь разумѣется сорбанъ (сурпан), которымъ покрывается голова замужней женщины.

CXLVIII. Вьюшка—лубочный цилиндръ для наматыванія пряжи

CLII. Пурĕђђĕ отъ гл. пур=пыр.

CLV. Пѣвецъ, прельщенный кокетствомъ и пикантностью какой-то Палагеи, раздумываетъ о томъ, сохранитъ ли она свою привлекательность и въ замужествѣ.

CLIX. Парни насмѣшливо предлагаютъ дѣвушкамъ устроить свадьбу украдкой, *увозомъ*. Такъ какъ краденая невѣста обходится жениху дешево, потому что за нее не платится цѣна (хулäп-укçи, холäм-окçи), то увозъ считается какъ для родственниковъ невѣсты, такъ и для нея самой вещью предосудительною,—тѣмъ болѣе, если увозъ устроится съ согласія самой дѣвушки, потому что въ послѣднемъ случаѣ возникаетъ сомнѣніе въ ея безупречной нравственности.

CLXI. Точнѣе: стали обростать усами, т. е. старѣть.

CLXIV. Числа *восемь* и *девять* имѣютъ у чувашъ таинственное значеніе, при чемъ первое изъ нихъ, какъ видно изъ пѣсни,—число несчастное, а послѣднее—счастливое.

CLXIX. Значеніе припѣва „Пуссађи“ мнѣ непонятно.

„Парлак“—заброшенная земля, венг. parlag.

CLXXIV. „**Тĕттĕрпи арман**“, по объясненію чувашина, приславшаго мнѣ эту пѣсню, означаетъ маленькую быстро вертящуюся мельницу; но точное значеніе слова „**тĕттĕрпи**“ мною не выяснено.

CLXXIV. Яйцо до того испещрено различными крапинками, что на немъ нѣтъ ни одного свободнаго мѣстечка, въ которое можно было бы воткнуть иголку.

CLXXV. Ужовка—родъ мелкихъ раковинъ, которыми убираютъ женскіе наряды.


CLXXXVIII. **Ҫакăр куҫ**— глаза съ разноцвѣтною радужною оболочкою.

CXCVII. Слово «Варвара» здѣсь смысла не имѣетъ и поставлено только для риѳмы.

Пѣсни IX, X, XI, XII, XV, XVI, XVII, XVIII, XIX, XX, XXI, XXII, XXIII, CXXIII, CXXIV, CXXV, CXXVI, CXXVII, CXXVIII, CXXIX, CXXX, CXXXI, CLXXXV—солдатскія; съ CXXXV до CXLIX включительно, а также CLII, CLIII, CLVII, CLVIII, CLXVI, CXC, CXCV, CXCVI—свадебныя; XXIV, XXV, XXVI, XXXII, XXXIII, XXXIV, XXXV, XXXVI, XLI, XLIII, XLIV; LI, LII, LIII, LVI; LX, LXI, LXIII, LXIV, LXVII, LXXIV, LXXV, LXXVI, LXXVIII, LXXIX, LXXXIX, XC, XCI, CIII, CIV, CVI, CIX, CX, CXI, CXII, CXIII CXIV, CXV, CXVII, CLXXXII, CXCVIII, CXCIX, CC—гостевыя; CLXIV, CLXVIII, CLXIX, CLXX, CLXXI, CLXXII, CLXXIV, CLXXVI, CLXXVII, CLXXVIII, CLXXIX—хороводныя пѣсни.

Остальныя пѣсни—разнаго содержанія.

Н. Ашмаринъ.


2007042101